# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

106 (7423) № * Шăмат кун, 2006 çулхи декабрĕн (раштав) 16-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**Çивĕч ыйту**

## Район хаçачĕн тиражне ӳстерме вырăнти радио хупăнни те хистет

Декабрĕн 22-мĕшĕнчен районти радиовещани хупăнать. “Муркаш калаçать!” – тенипе пиншер çын çĕнĕ куна пуçланă. Муркаш тăрăхĕнчи хыпарсене пĕлсе тăнă. Халĕ çак информаци каналĕ пирĕн пурнăçран çухалать.

Район çыннисем информаци вакуумне кĕрсе ӳкмĕç-и?

Иртнине аса илер. Патша саманинче официаллă хыпарсене пĕлтерекен ятарлă çынсем пулнă. Вĕсем хула площачĕсене тухса патша указĕсене халăха кăшкăрса вуласа панă. Кун пек çынсене глашатай тенĕ. Ун чухне халăхăн тĕп пайĕ вулама та пĕлмен ĕнтĕ. Апла пулин те влаç ăна информаципе тивĕçтерме кирлине ăнланнă.

Совет саманинче те ку ĕçе аван йĕркеленĕ. Килĕрен икшер-виçшер экземпляр тĕрлĕ хаçат-журнал илсе тăнă. Пропагандистсемпе агитаторсем те халăх хушшинчех пулнă.

Халĕ эпир çĕнĕ саманара пурăнатпăр. Глашатайсен, пропагандистсемпе агитаторсен ĕмĕрĕ хыçа юлчĕ. Çĕнĕ пурнăç информаципе тивĕçтерессипе те çĕнĕлле ĕçлеме ыйтать. Паян информацин тĕп хатĕрĕсем çаксем пулса тăчĕç: радио, телевидени, пресса тата Интернет.

Халĕ района таврăнар. Вырăнти радиовещани хупăннăран районти “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçат кăна халăха информаципе тивĕçтермелли хатĕр пулса юлать.

Лару-тăру кăткăслăхне ăнланса, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов “Çĕнтерӳ ялавĕ” тиражне ӳстерме кирлине палăртрĕ.

Паян пирĕн республикăра районсемпе хуласен 22 хаçачĕ тухать. Тиражпа чи сумли Çĕнĕ Шупашкарти “Грани” хаçат, вăл 5600 экземплярпа пичетленет. Çĕмĕрле районĕпе хулин “Малалла” (“Вперед”) хаçачĕ иккĕмĕш вырăнта, тиражĕ 5432 экземпляр. Виççĕмĕшĕнче Етĕрнесем – 3350 экземпляр. Муркашсем тăваттăмĕш вырăнта – 3334 экземпляр. (Кăтартусем кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне çырăнтарнине пĕлтереççĕ.)

Муркашсем малтисен ретĕнче. Анчах ку лăпланмалли сăлтав мар.

Паян пурнăç тĕлĕнмелле хăвăрт улшăнать. Çĕнни куллен вăя кĕрет. Сывлăха сыхлассинче, вĕрентӳ ĕçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Ял хуçалăхĕ тĕпрен улшăнмалла. Çĕр ыйтăвĕ. Çурт-йĕр, хваттер тума патшалăх миллионшар тенкĕ пулăшу парать. Килти хушма хуçалăха аталантарма кăçал кăна район çыннисем 117 миллион тенкĕлĕх патшалăх кредитне илчĕç. Социаллă сферăра та пысăк улшăнусем. Ача амăшĕсене пулăшма патшалăх миллиардшар тенкĕ уйăрать. Тата ытти те.

Çĕнĕлĕхсемпе усă курас тесен вĕсем çинчен пĕлес пулать. Тата хайхи çăмăллăхсене камран кайса ыйтмалла? Мĕнле хутсем хатĕрлемелле? Вĕсемпе усă курма хăçанччен ĕлкĕрмелле?

Çакăн йышши ыйтусене çутатса парассине “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçат малти вырăна хурать. Муркаш районĕнчи пурнăç пирки тĕрлĕ енлĕн çырса кăтартакан урăх хаçат çук, тăвансем!

Анчах ял хушшине тухса çынсемпе калаççан, тепĕр чухне тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕн. Ун пирки те, кун пирки те илтмен. “Усă курмаллаччĕ”, “Пирĕн те илмеллеччĕ”, – теççĕ. Хăйсем радио та итлемеççĕ, хаçат та çырăнмаççĕ.

Паян кашни çыннăнах çакна ăнланмалла. Хăвна кирлĕ информацие хăвăнах шыраса тупмалла. Шыраса тупмалла та усă курма пултармалла. “Пĕлмен, илтмен”, тенипе эсĕ паян пурнăçран тăрса юлатăн.

Район хаçатне халăх хушшине ытларах сарма кирли куç кĕрет. Сахал тупăшлă çемьесене пулăшас текенсем те ыра пуçару турĕç. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов “Çĕнтерӳ ялавне” пĕр ялти çынсене çырăнса пама пулчĕ. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов Исетерккĕ тăрăхĕнчи 30 çемьене райхаçат çырăнса пама шантарчĕ. Муркаш райпо совечĕн пуçлăхĕ Б.В. Андреев кашни магазинтах райхаçат пулассине пĕлтерчĕ. Районти ăнăçлă ĕçлекен предпринимательсем те çак пуçаруран юлмаççĕ.

“Ударник”, “Оринино”, “Свобода”, “Восток”, “Герой”, “Лидер”, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем район хаçатне ял çыннисене ведомоçпе çырăнма майсем туса панине ырламалла.

Районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕсем, ял тăрăхĕсен депутатсен Пухăвĕсен депутачĕсем те ыттисемшĕн ырă тĕслĕх кăтартасси пирки иккĕленместпĕр.

Килĕшет-и пире, килĕшмест-и, çĕнĕ пурнăç пире çĕнĕлле пурăнма хистет, вĕрентет. Пурнăçра пулса иртекен улшăнусене курмасăр, пĕлмесĕр тăма пултараймастпăр. Информаци ĕмĕрĕнче кирлĕ хыпар-хăнарпа паллашни те кирлĕ. Сире ку енĕпе 1944 çултанпа тухакан “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçат яланах пулăшма хатĕр.

**А. ТИХОНОВ,**
**Муркаш издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотисене тивĕçнĕ

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, Ильич яч. хис. хуçалăх, «Ударник» хуçалăх дирекцийĕпе профсоюз комитечĕ, Чкалов яч. хис. тата «Передовик» хуçалăхсем ыйтнине тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн декабрĕн 6-мĕшĕнчи 584 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Зоя Ивановна МИХАЙЛОВАНА**, «Ударник» хуçалăхри Панклири производство участокĕнчи 4-мĕш номерлĕ сĕт-çу фермин машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Василиса Апполинаровна СЕРГЕЕВАНА**, «Ударник» хуçалăхри Йӳçкассинчи производство участокĕнчи 1-мĕш номерлĕ сĕт-çу фермин машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Василий Федорович СМИРНОВА**, «Передовик» хуçалăх прорабне;

– **Рената Аркадиевна ТЕРЕНТЬЕВАНА**, Ильич яч. хис. хуçалăхри 2-мĕш номерлĕ сĕт-çу фермин машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Владимир Петрович ТРОФИМОВА**, Чкалов яч. хис. хуçалăхăн автомашина водительне.

2. Ачасене вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Михаил Семенович ВАСИЛЬЕВА**, Муркаш лицейĕн математика учительне.

**Хушу**

## Уяв инкексĕр ирттĕр

Район администрацийĕн пуçлăхĕ кăçалхи декабрĕн 8-мĕшĕнче йăлара усă куракан пиротехника хатĕрĕсене сутассине йĕркелес тĕлĕшпе 522-мĕш номерлĕ йышăну тунă. Çакă вăл чи малтанах пушар тухас хăрушлăха, инкексем пулассине чакарассипе çыхăннă.

Çапла вара пиротехника хатĕрĕсене уйрăм çынсемпе юридически вăйри çынсене суту-илĕвĕн стационарлă предприятийĕсенче, ваккăн суту-илӳ тăвакан предприятисенче: киосксенче, павильонсенче, пасарта сутма ирĕк параççĕ. Анчах та Роспотребнадзорăн территори управленийĕн территори уйрăмĕн санитарипе эпидемиологи йышăнăвĕ тата районти шалти ĕçсен пайĕпе патшалăх пушар хăрушсăрлăх уйрăмĕн çирĕплетĕвĕ кирлĕ. Кунсăр пуçне пиротехника хатĕрĕсене 14 çул тултарнисене тата аслăрах çулхисене кăна сутма ирĕк панă.

Пиротехника хатĕрĕсем сутакансен продукцин заводри пахалăх сертификачĕ кирлĕ. Тĕрĕслев органĕсене çак хушу мĕнле пурнăçланнине вĕçĕмех тĕрĕслесе тăма хушнă.

Ку хушу мĕнле пурнăçланнишĕн район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова ответлă пулса тăрать.

**Муркашри кирпĕч завочĕ ĕçлеме тытăннăранпа 35 çул çитнĕ май**

## Салатма çур талăк, пуçтарма çулталăк



***Муркашри кирпĕч завочĕ – районти пысăк промышленность предприятийĕсенчен пĕри. Çитес çул вăл продукци кăларма тытăнни 35 çул çитет. Çав тапхăрта аталану çулĕпе çирĕппĕн малалла кайса пынă вăхăтсем те, рынок хутшăнăвĕсем пурнăçа кĕрсе пынă май, йывăрлăхсене чăтаймасăр, каялла чакни те пулнă. Уйрăмах юлашки çулсенче лару-тăру кунта йывăрланса çитнĕччĕ, завод хупăнасси пирки те ыйту тухса тăчĕ. Шăпах çулталăк каялла завод директорĕ пулма Владимир Петрович Тукмакова шанчĕç. Сăмах май, Етĕрнери кирпĕч заводне те вăлах ертсе пырать. Муркашри кирпĕч завочĕ тĕлĕшпе директор çумне Юрий Иванович Петрова çирĕплетрĕç. Йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла утăмласси каялла чакасси мар, чылай тертленме, тар кăларма тивет. Апла пулин те юлашки вăхăтра «Чувашагропромстрой» пĕрлешĕве кĕрекен завод пурнăçĕнчи ыра улшăнусем куçкĕрет. Вĕсем пирки сăмах пуçартăм эпĕ Юрий Иванович ПЕТРОВПА тĕл пулнă май.***

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Ниме**

## Кĕлĕ çуртне тума

Муркашра кĕлĕ çурчĕ çĕкленет. Никĕсне янă. Халĕ çурт стенисене хăпартаççĕ. Кунта вăй хуракансем тăрăшни куç умĕнчех. Анчах кун пек пысăк ĕç укçа-тенкĕсĕр пулмасть.

Пулăшу паракансем те çук мар. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов 5000 тенкĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов 3000 тенкĕ хывнă. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин та 5000 тенкĕ уйăрнă. И.Н. Никитин предприниматель 5000 тенкĕ, О.А. Портнов предприниматель 1000 тенкĕ панă, А.В. Малышев стройматериал парса пулăшнă. В.Г. Степанова 150 тенкĕ, Г.М. Анисова 100 тенкĕ, В.А. Васильева 50 тенкĕ хывнă. Виççĕшĕ те культура сферинче ĕçлеççĕ.

Кĕлĕ çуртне тума пулăшас текенсене Муркаш ял тăрăхне пыма ыйтаççĕ.

**Специалист калаçăвĕ**

## Хĕлле юр ыйтса илеймĕн

***Хĕлле çитрĕ, тет календарь. Çапла, тахçанах вăхăт ĕнтĕ – хĕл кунĕ, анчах та çакна пĕртте ĕненес килмест. Тахçанах çĕре шапшурă юр витмелле пекчĕ. Кĕçĕн çулхисене Хĕл Мучипе Юрпике ăсталасси шутлаттарать. Аслă çулхисене вара çитес çулхи тырпул, пахча-çимĕç пуласлăхĕ пуç ваттарать. Çакăн пек çанталăк тăни калчасене сиен кӳмест-и тата вĕсен тĕрĕс-тĕкел хĕл каçас шанчăк пур-и? Çакăн тавра калаçма ыйтрăм эпĕ районти ӳсен-тăрана сыхлас енĕпе ĕçлекен станци агрономне А.С. СЕМЕНОВА.***

**– Алексей Семенович, районти кĕрхи культурăсен лаптăкĕ пĕчĕк мар. Тĕрĕс-тĕкел шăтса тухнă калчасене çакăн пек çанталăк сиен кӳмĕ-и?**

– Чăнах та, асăрхарăмăр ĕнтĕ, кашни çулах çанталăк пĕрешкел килмест. Юр çунă пулсан ăна йывăççем тавралла таптаса хытарма та вăхăтчĕ.

Паянхи куна илес пулсассăн, калчасемшĕн çак çанталăк сиенлĕ мар. Анчах та юр çумасăр тăрук хытă шăнтса лартсан сиен кӳме пултарать. Мĕншĕн тесен кун пек чухне калчасен тымарĕсем татăлас хăрушлăх пур. Паллах, çанталăк мĕнле пулассине никамах та тĕрĕс калаймасть пулĕ. Çапах та çур акинче акса хăвармалли вăрлăха, кĕрхи калчасем пĕтсен, çур акине валли çителĕклĕ хатĕрлени ытлашши пулмĕ.

Енчен те калчасене кĕркунне имçамсемпе апатлантарнă пулсан, питĕ аван. Çак çанталăк условийĕсенче калчасен пулăхлăх пайĕ сахалланса юлать. Çавна пула калчасем имшерленеççĕ. Енчен те ĕçе пурнăçлама ĕлкĕреймен пулсан, çуркунне вара чи малтан минераллă удобренисемпе апатлантарма тăрăшмалла.

**– Çанталăк улшăнăвĕ шăшисем хунасси çине витĕм кӳме пултарать-и?**

– Вĕсемшĕн çакăн пек услови питĕ лайăх. Чылай хуçалăхра кĕрхи çĕртме туман уйсем сарăлса выртаççĕ. Унтах пуçтарман улăмсем те нумай. Тыр-пул пухса кĕртесси кăçал кая юлса пычĕ. Çавăнпа та вĕсемшĕн апат çителĕклĕ. Симĕс калчара та тутлăхлă апат чылай. Апла пулсан шăшисемшĕн палăрмаллах йыш хушмалли тапхăр. Нумай çул ӳсекен курăксем те вĕсемшĕн лайăх хӳтлĕх тата апат. Çавăнпа та шăшисемпе çине тăрса кĕрешмелле, эмелсемпе усă курмалла. Хуçалăхри агрономсен шăшисене хирĕç кĕрешме тулă хутăшĕнчен тунă “Бактероденцид” ятлă им-çампа усă курмалла. 1 гектар çине 0,5 килограмм усă курмалла. Енчен те сирĕн ыйтусем сиксе тухсан, канаш ыйтма пирĕн пата килĕр. Çавăн пекех Республикăри ӳсен-тăрансене сыхлас енĕпе ĕçлекен станцинче канаш ыйтма пултаратăр: Шупашкар хули, Кременски урамĕ, 36-мĕш çурт. Телефон: 55-88-13.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

**Юбилей**

## Саламлатпăр



Муркашра пурăнакан юратнă аннене, хаклă кукамая – **Вера Петровна ПИКУЗОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Утас кун-çулу яланах такăр пултăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ тăванусенчен ан татăлтăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кинĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Хамăрăн юратнăран та юратнă аннене, ырă кăмăллă хунямана, тараватлă кукамая, хаклă асаннене – Платкасси ялĕнче пурăнакан **Нина Николаевна ТИМОФЕЕВАНА** 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн пуç тайса саламлатпăр. Аннеçĕм! Эсĕ пирĕншĕн ăшă кăмăл çăл куçĕ, вăйхал паракан юратăвăн сӳнми хĕлхемĕ, ырă тĕслĕх. Эс пурри – пирĕн пуянлăх, савăнăç. Малалла та вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр. Çĕр çул пурăн, ан чирле.

**Саламлаканĕсем: 2 ывăлĕпе кинĕсем, 3 хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, 13 мăнукĕ, тăванĕсем.**

Пирĕн хаклă çыннăмăр, мăшăр, атте, хуньстарик – Кĕрекаç ялĕнче пурăнакан **Анатолий Васильевич АСТРАХАНЦЕВ** çак кунсенче хăйĕн çуралнă кунне паллă тăвать. Çав ятпа ăна саламласа чăваш юманĕ пек вăй-хал, иксĕлми телей, сурпан пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Çемьере килĕшӳпе ăнланулăх, тату пурнăç ялан хуçаланччăр. Ĕçӳнте çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума сунатпăр. Ĕмĕтĕрсем çитсе, тĕллевĕрсем яланах пурнăçланса пыччăр.

**Ăшпиллĕн саламласа: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе икĕ кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**